28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
НОЯБРЬ
14
ЮНКУН
221 (6972) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Советĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ТРАКТОРСЕНЕ ЮСАС ĔÇРИ ХĂВĂРТЛĂХА ӲСТЕРЕР

Республикăра ялхуçалăх çулĕ вĕçленсе пырать. Нумай колхозсем тырпула вăхăтра пухса кĕртсе пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлеме колхозсемпе совхозсене пирĕн МТС-сем пысăк пулăшу пачĕç. Кăçал пирĕн республикăри МТС-сем иртнĕ çулсенчинчен лайăхрах ĕçлерĕç. 18 МТС тракторсемпе çулталăкра тумалли ĕç планне тултарнă е иртерсе тултарнă. Вăрнар, Шăхасан, Куславкка, Елчĕк, Йĕпреç, Çĕрпӳ, Красноармейски, Вăрмар тата ытти МТС-сем те хăйсен планĕсене иртерсе тата лайăх пахалăхпа ăнăçлă тултарчĕç. Иртнĕ çул тракторсене лайăх юсанăшăн Йĕпреç тата Шăхасан МТС-ĕсем ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕсене илме тивĕç пулчĕç. Вăрнар МТС-ĕ кăçалхи çураки итогĕсем тăрăх Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕç пулчĕ. Иртнĕ çулсенче юлса пынă Канаш, Чкаловски, Улатăр, Первомайски тата ытти хăшпĕр МТС-сем те кăçал хăйсен планне ăнăçлă тултарчĕç.

Малта пыракан МТС-сен çитĕнĕвĕ, чăн малтанах, тракторсемпе комбайнсене тата кӳлсе ĕçлемелли ытти машинăсене вăхăтра тата лайăх юсанинчен те нумай килнĕ. Колхозсенче ялхуçалăх çулĕ вĕçленсе пынă май МТС машинисем пушанса пыраççĕ. МТС тракторĕсемпе ытти машинисене халех çирĕп график тăрăх юсасси МТС-семшĕн паян тумалли тĕп задачăсенчен пĕри пулса тăрать, мĕншĕн тесен килес çул колхозсен умĕнче тăракан пысăк ĕçсене пурнăçласси МТС-сенчен те чылай килет. Нумай районсен тата МТС-сен руководителĕсем тракторсемпе машинăсене вăхăтра тата лайăх юсани ответлă ĕç пулнине лайăх ăнланаççĕ. Чкаловски МТС тракторсемпе ытти машинăсене IV-мĕш кварталта юсамалли плана 47,3 процент тултарнă. Красноармейски, Йĕпреç, Куславкка МТС-ĕсем те тракторсем юсамалли IV-мĕш кварталти планне 20—25 процент тултарнă.

Анчах та республикăри пур МТС-сенче те тракторсемпе ытти машинăсене юсас ĕçе кирлĕ пек туса пыраççĕ теме çук-ха. Паянхи кун тĕлне республикăри МТС-сем IV-мĕш кварталта тракторсем юсамалли плана пурĕ те 7 процент ытларах кăна тултарнă. Республикăра 18 МТС октябрь уйăхĕнче тракторсем юсамалли плана тултарайман. Иртнĕ çул тракторсене вăхăтра юсаман пирки Шăмăршă, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Октябрьски тата ытти хăшпĕр МТС-сем çуракине кирлĕ пек хатĕрленсе тухаймарĕç тата çураки вăхăтĕнче те тухăçлă ĕçлеймерĕç. Иртнĕ çулхи йăнăшсене кăçал тепĕр хут тума юрамасть.

Правительство постановленине ăнăçлăн пурнăçлас тесе, тракторсене, комбайнсене, молотилкăсене тата ытти машинăсене юсас тĕлĕшпе кашни районах çирĕп график панă. Çак график вăл—никам та пăсма пултарайман йĕрке пулса тăрать. Вырăнти парти тата совет организацийĕсен çак графика МТС-сем мĕнле пурнăçланине çирĕп тĕрĕслесе тăмалла тата тракторсем юсас ĕçе кирлĕ пек организацилеме пур майсемпе те пулăшса пымалла. Чăн малтанах, трактористсемпе ремонт ĕçĕнчи рабочисене кирлĕ ĕç условийĕсем туса парассишĕн тăрăшмалла. Тракторсемпе ытти машинăсене юсама кирлĕ мастерскойсем, рабочисемпе трактористсем пурăнакан общежитисем ăшă та сутă пулмалла, кашни МТС-рах столовăйсем организацилемелле, политикăллă-массăллă ĕçе çӳллĕ шайра тытас тесе МТС коллективĕнче ĕçлеме чи лайăх агитаторсене уйăрмалла.

Чылай МТС-сем комбайнсене юсас ĕçе тракторсене юсаса пĕтернĕ хыççăн, тырпул пухса кĕртме пуçăнас умĕн кăна тытăнаççĕ. Çак юрăхсăр йĕркене кăçал пур тĕлте те пĕтермелле. Вăл системлĕ йĕрке пирки пирĕн республикăри МТС-сен кăçал чылай комбайнĕсем тырпул пухса кĕртес ĕçе кирлĕ пек хутшăнаймарĕç. Комбайнсене те правительство кăтартнă срокçенче юсама тытăнмалла. МТС-сен колхозри ĕçрен пушаннă пур тĕрлĕ машинăсене те МТС картишне, мастерскойсен çывăхне илсе килмелле, унта вĕсене типтерлесе лайăх вырăна лартмалла, мĕнле пайĕсене юсамаллине тĕрĕслесе шута илмелле. Колхозсенче юлакан машинăсене сыхласа тăма колхоз председателĕсен аллине акт çырса памалла.

Тракторсемпе ытти машинăсене юсас ĕçе пур майсемпе те хăвăртрах организацилемелле. МТС-сенчи трактористсем, механиксем тата рабочисем Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче тракторсемпе ытти машинăсен тĕрлĕ пайĕсене юсаса çĕнетес тата çĕнĕрен тăвас тĕлĕшпе пысăк опыт туянчĕç. Çак опытпа кăçал та анлăн усă курмалла. Тĕрлĕ пайсене хатĕрлес тата юсас ĕçре МТС-ăн шалти ресурсĕсене мобилизацилемелле тата механиксемпе трактористсен, рабочисен ĕçри пултарулăхĕпе, пуçарулăхĕпе тракторсене юсанă çĕрте анлăн усă курмалла.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче промышленность предприятийĕсем МТС-сене тракторсем тата ытти машинăсем юсас ĕçре пысăк пулăшу пачĕç, вĕсем тĕрлĕ пайсем çĕнĕрен турĕç тата киввисене юсама та пулăшрĕç. Халĕ, вăрçă чарăннă хыççăн, çак паха опыта тата анлăрах сарса пыма пур условисем те çителĕклĕ. Промышленность предприятийĕсем МТС-сем валли запаслă пайсем хатĕрлес тата киввисене çĕнетсе юсас ĕçе хăйсен чи паха та хисеплĕ тивĕçĕ вырăнне хумалла; çак ĕçе тума вăхăт та, материал та тупмалла. МТС-семпе тунă договора пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Тракторсемпе ытти машинăсене юсас ĕçри Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн иртнĕ çулхи условийĕсем кăçал та сыхланса юлаççĕ. Тракторсемпе ытти машинăсене юсамалли уйăхри плана тултарнăшăн тата иртерсе тултарнăшăн МТС-семпе МТМ-сене тата ремонт завочĕсене премилеме ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен 35 Хĕрлĕ Ялавĕ пулать. Иртнĕ çулхи пекех, тракторсемпе машинăсене юсамалли плана вăхăтра тата лайăх тултарнăшăн МТС-сен, МТМ-сен, ремонт завочĕсен руководителĕсене, инженерĕсемпе техникĕсене тата республикăри наркоматсенчи работниксене премилемелли йĕркене 1945—1946 çулсене тăсмалла тунă.

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çĕрĕн Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлесси кашни МТС-ри, МТМ-ри трактористсемпе рабочисен тата пĕтĕм коллективĕн чи хисеплĕ те чыслă тивĕçĕ пулса тăрать. Парти тата совет организацийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн условийĕсем çинчен кашни МТС коллективне тĕплĕн ăнлантарса памалла, çак ăмăртăва кашни тракториста, механика тата рабочие явăçтарассишĕн кулленех ĕçлемелле. Трактористсемпе рабочисем хушшинче хурçă пек çирĕп ĕç дисциплини тăвасси, кулленхи заданисене пĕр пăркаланмасăр тултарса пырассишĕн пĕтĕм вăя хурса кунĕн-çĕрĕн ĕçлемелле.

1945-мĕш ялхуçалăх çулĕ вĕçленсе пырать. Колхозлă ял çитес çуракине хатĕрленме тытăнчĕ. Çуракине хатĕрленес ĕçре МТС коллективĕсем малта пымалла. Кашни тракторист, трактор бригади, комбайнер, машинист тата рабочи ăмăрту пуçарса ярса тракторсемпе комбайнсене тата ытти машинăсене юсамалли плана срокчен тултарассишĕн кĕрешĕве тухмалла.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АССР-ĕнчи Суйлав комиссийĕн составне çирĕплетесси çинчен

«СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 39-мĕш, 40-мĕш тата 41-мĕш статьисем тăрăх, Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АССР-ĕнчи Суйлав комиссийĕн составне, çак общественлă организацисемпе ĕççыннисен обществисен представителĕсене кĕртсе, çирĕплетес:

Чăваш АССР-ĕнчи Суйлав комиссийĕн председателĕ—Яков Кузьмич **Павлов** — Чăваш республикинчи коммунистсен организацийĕнчен;

Чăваш АССР-ĕнчи Суйлав комиссийĕн председатель заместителĕ — Людмила Григорьевна **Денисова**—Пуçламĕш тата вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профессиллĕ союзĕн Чăваш Обкомĕнчен,

Чăваш АССР-ĕнчи Суйлав комиссийĕн секретарĕ—Николай Трифонович **Тютиков**—Чăваш республикинчи Осоавиахимăн Центральный Совечĕнчен.

Суйлав комиссийĕн членĕсем:

Евгений Васильевич **Дмитренко**—Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен,

Василий Васильевич **Зайцев**—Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри колхозниксемпе колхозницăсенчен,

Семен Матвеевич **Ислюков**—Шупашкарти коммунистсен организацийĕнчен,

Александра Анепадистовна **Кондакова**—Чăвашсен педагогика институчĕпе учитель институтĕнчи научнăй работниксемпе преподавательсенчен тата студентсемпе служащисенчен,

Леонид Григорьевич **Николаев**—Канаш станцийĕнчи депора ĕçлекен рабочисемпе служащисенчен,

Георгий Ильич **Петрухин** — Пĕтĕм Союзри çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Чăваш республикинчи организацийĕнчен,

Александра Ивановна **Скворцова**—Шупашкарти пир-авăр фабрикинчи рабочисемпе служащисенчен тата инженерсенчен,

Аркадий Александрович **Эсхель**—Чăваш совет писателĕсен союзĕнчен.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.
Шупашкар хули, 1945 çулхи ноябрĕн 13-мĕшĕ.

В. М. МОЛОТОВ ЮЛТАШ ДОКЛАДНЕ ĂНЛАНТАРНĂ ХЫÇÇĂН

МУРКАШ. В. М. Молотов юлташ 1945 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада ăнлантарма районри партипе совет активĕнчен 26 çын колхозсене тухса кайнă.

Халĕ пур колхозсенче те Молотов юлташ докладне сӳтсе-явса ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлеме пулса, татăклă обязательствăсем илеççĕ.

«Аврора» колхоз членĕсем Молотов доклачĕ çине ответлесе, ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерме пулчĕç. Планран иртторсе Хĕрлĕ Çар фондне 480 центнер тырă пачĕç. Çавăн пекех «Авангард», Каганович, Маленков ячĕпе тăракан колхозсенче çак кунсенчех авăн çапса пĕтерме пулчĕç. Агитаторсем ĕççынниссене Молотов юлташ докладне тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. «Авангард» колхозри А. Шишкин, Д. Григорьев, Г. Скворцов агитаторсем хăйсен участокĕнчи колхозниксене Молотов юлташ докладне ăнлантарса панă хыççăн, бригадăра ĕç тухăçлăхне чылай хăпартрĕç.

— Молотов юлташăн историллĕ доклачĕ Тăван çĕршыв вăй-хăватне татах та ӳстерме чĕнет. Эпир колхозра ырми-канми ĕçлемелле,—тет 60 çулхи колхозник Д. Данилов юлташ.

* * *

ИШЛЕЙ. Агитаторсем колхозниксемпе колхозницăсене Октябрьти Социализмлă Революци 28 çул тултарни çинчен Молотов юлташ тунă доклада ăнлантарса параççĕ. Молотов юлташ докладне ăнлантарас тĕлĕшпе ял Совечĕсене районри партипе совет активĕнчен 23 çын тухса кайнă. Вĕсем агитаторсене пухса Молотов юлташăн докладне тĕплĕн ăнлантарса панă. Халĕ агитаторсем доклада бригадăсенче ăнлантарса параççĕ.

Районри колхозсенче доклада ăнлантарса панă хыççăн ĕç хăвăртлăхĕ ӳсрĕ. Анаткас-Марка ял Совечĕнчи агитколлективра ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ Д. Михайлова юлташ Молотов юлташ докладне тĕплĕн ăнлантарса панă. Агитаторсем колхозниксене доклада ăнлантарса панă хыççăн, кунти колхозсенче çĕрĕн-кунĕн авăн çапма тытăнчĕç. Ку ял Советĕнчи «Красноармеец», «Правда», «Новое Марково» колхозсем кĕлте турттарассине, государствăна тырă парассине, пахча-çимĕç пухса кĕртессине ăнăçлăн вĕçлерĕç. Çак кунсенчех авăн çапса пĕтереççĕ.

Мамăш, Сĕньял-Покровски, Пĕрремĕш Алĕн, Чурачăк ял Совечĕсенчи колхозсенче те хăвăртрах авăн çапса пĕтерме тăрăшаççĕ, ĕç тухăçлăхĕ ӳссех пырать.

УЯВА ÇИТĔНӲСЕМПЕ КĔТСЕ ИЛЧĔÇ

ЧУРАЧĂК. (Хамăр корр.). «Герой» колхоз иртнĕ çулсенче кая юлса пынă. Ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра пурнăçласа пырайман. Кăçалхи çул колхозниксем нихăш çулхинчен те лайăхрах ĕçлерĕç. Тырăсене вăхăтра вырса пĕтерсе пĕтĕмпех турттарса кĕртрĕç.

Колхозри 1-мĕш бригада (бригадирĕ С. Никитин юлташ), тырăсене ытти бригадăсенчен малтан çапса пĕтернĕ. А. Титова, М. Павлов, Е. Федорова, А. Кузьмин тата ыттисем те хăйсен нормисене 200-шер процент ытла тултарса ĕçленĕ. Колхозăн лашапа ĕçлекен молотилкипе çĕрĕн-кунĕн авăн çапнă.

Колхоз Октябрь уявне çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕ. Государствăна тырă, пахча-çимĕç, сĕт-çу, аш-какай, çĕрулми памалли обязательствăсене ял Советĕнчи ытти колхозсенчен нумай малтан тултарчĕ. «Герой» колхоз кăçалхи ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕ.

СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленеççĕ

СОВЕТСКОЕ. Районри чылай колхозсемпе учреждениссенче «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» вĕренме ятарласа кружоксем организациленĕ. Ку кружоксене коммунистсемпе комсомолецсем тата учительсем ертсе пыраççĕ. Ишекассинчи пуçламĕш парторганизацин çумĕнче суйлав Положенине колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса пама ятарласа агитаторсем уйăрнă. Çав агитаторсене суйлав положенийĕпе, СССР Конституцийĕпе тата И. В. Сталин ССР Союзĕн Конституцийĕн проекчĕ çинчен тунă докладпа тĕплĕн паллаштарнă. Халĕ агитаторсем хăйсене çирĕплетсе панă участоксенче хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ. П. Сорокин, М. Константинов, Н. Орлова тата ытти агитаторсем те суйлавçăсемпе вуншар калаçу ирттернĕ.

Суйлав Положенине вĕренессине тата массăллă агитаци ĕçне кирлĕ пек ертсе пырас майпа Ишекассинче агитпункт уçнă. Агитпункт ĕçне П. Сорокин юлташ ертсе пырать. Унта çĕнĕ хаçат-журналсем çителĕклĕ. Агитпункта лозунгсемпе, плакатсемпе тата çулпуçсен портречĕсемпе илемлетнĕ. Унта яланах агитаторсем пулаççĕ, тĕрлĕ справкăсем, консультацисем параççĕ. Суйлав законне çамрăксем хушшинче вĕрентес тĕлĕшпе уйрăмах Корзаев, Ильин тата Владимиров комсомолецсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

И. АЛЕКСЕЕВ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Районри пур агитколлективсенче те хаяль хĕрӳллĕ ĕç пырать. Вĕсем суйлавçăсене СССР Верховный Советне суйламалли Положение ăнлантарса параççĕ. Байсубино ял Советĕнчи агитаторсем суйлав Положенийĕ хаçатсенче пичетленсе тухнă хыççăнах ăна суйлавçăсене вуласа ăнлантарса пама тытăнчĕç. Кашни агитатора уйрăм бригадăсем сумне çирĕплетнĕ. Вĕсем Положение ăнлантарса панипе пĕрлех, ытти материалсемпе те усă кураççĕ. Агитколлектив руководителĕ Данилов юлташ час-часах агитаторсемпе калаçу сем ирттерет. Хăй те колхозниксем хушшинче докладсем тăвать.

Ял Советне кĕрекен «Жнейка» колхозри агитаторсем Петров, Иванов юлташсем те аван ĕçлеççĕ.

С. ШАДИН.

* * *

ЕЛЧĔК. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизаци суйлав Положенине ăнлантарас ĕçе план тăрăх туса пырать. Çав план тăрăх кашни бригадăра икшер çĕрте, фермăра ĕçлекенсем хушшинче икĕ çĕрте, колхозра мĕн пурĕ 14 çĕрте суйлав Положенине ăнлантараççĕ.

Суйлав Положенине вĕренме колхозниксем пухăнакан çуртсене плакатсемпе лозунгсем çыпăçтарса илемлетнĕ. Агитаторсем пулса коммунистсемпе комсомолецсем тата учительсем ĕçлеççĕ. Вĕсенчен хăшпĕрисем иртнĕ суйлавсенче те агитаци ĕçне туса пынă.

Суйлав Положенине вĕренес тĕлĕшпе занятисем кашни эрнерех пулса иртеççĕ. Ку тарана çитсе кашни агитатор вицшер заняти ирттернĕ. Вăл занятисенче суйлав Положенин малтанхи сыпăкĕсене тата СССР Конституцийĕн суйлав çинчен калакан статьисене ăнлантарса панă. Çитес занятисенче Положенин ытти сыпăкĕсене тата Сталин юлташ Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсем умĕнче каланă сăмаха ăнлантарса пама хатĕрленеççĕ.

Колхозниксем суйлав Положенине вĕренме занятисене хавхаланса пухăнаççĕ, суйлава ирттермелли йĕркепе интересленеççĕ. Осипов, Шуйкова, Щербакова агитатор-учительсем занятисене уйрăмах лайăх ирттереççĕ.

Т. ИВАНОВ.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ АВĂН ÇАПАС ĔÇ НОЯБРĔН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă	РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă
1. Шăмăршă	96,9	16. Калинино	84,0
2. Йĕпреç	92,8	17. Комсомольски	83,8
3. Чкаловски	91,8	18. Элĕк	83,7
4. Вăрнар	89,6	19. Хĕрлĕ Чутай	82,5
5. Елчĕк	89,1	20. Улатăр	82,0
6. Красноармейски	88,8	21. Сĕнтĕр	80,9
7. Канаш	88,2	22. Шăхасан	80,8
8. Шупашкар	87,5	23. Чурачăк	78,6
9. Первомайски	86,8	24. Муркаш	76,9
10. Ишлей	86,3	25. Сĕнтĕрвăрри	75,9
11. Вăрмар	86,1	26. Кувакино	75,4
12. Çĕрпӳ	86,1	27. Çĕмĕрле	75,2
13. Октябрьски	85,0	28. Советски	74,7
14. Тăвай	85,0	29. Пăрачкав	68,3
15. Куславкка	84,8	30. Етĕрне	68,0

Калинино МТС-ĕ плана тултарнă

Калинино МТС-ĕ кăçал хăйĕн планне 109 процент тултарчĕ, авăн çапмалли плана 100 процент тултарнă. Килес çула хатĕрленес тесе, тракторсем юсама тытăнтăмăр. 4 трактор юсаса пĕтернĕ. Халĕ пĕтĕм коллектив трактор юсас ĕçре ĕçлет.

А. СТЕПАНОВА,
МТС-ри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене хăвăртрах парса татар

ШĂХАСАН. Районри малта пыракан колхозсем Октябрь уявне ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленипе, государство умĕнчи парăмсене срокчен тӳлесе татни пе кĕтсе илчĕç. «Хĕрлĕ партизан», «Прожектор», «Гвардеец», Куйбышев ячĕпе тăракан, «Оборона», «Красный луч» тата ытти колхозсем государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли пур обязательствăсене те иртерсе тултарчĕç.

«Свобода», «Гвардеец», «Красноармеец», «Новая жизнь» колхозсем государствăна 1946-мĕш çулшăн аш-какай парса татнă. Уйкас Кипекри «Гвардеец» колхоз 1946-мĕш çулшăн 40 центнер аш-какай, 588 çăмарта, 13 килограмм çăм, 240 литр сĕт панă.

Анчах государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парасси хăшпĕр колхозсенче калама çук сӳрĕккĕн пырать. Сителти «Победа» колхоз (председателĕ Сорокин) çак çулшăн государствăна 28 центнер аш-какай, 4000 çăмарта, 3000 литр сĕт, 40 килограмм брынза парса татман. Матьшури «Молодой колхозник» колхозăн (председателĕ М. Марков) государствăна 26 центнер аш-какай, 6366 литр сĕт, 42 килограмм брынза памалла.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене парас тĕлĕшпе «Победа»», «Чуваш ЦИК», «Канаш», «Березовка», «Красный пахарь», «Доронин» тата ытти хăшпĕр колхозсем те начар ĕçлеççĕ. Çак кая юлса пыракан колхозсен председателĕсем «выльăхсем начар-ха, самăрлатсанах кайса паратпăр»,—тесе сăмах çаптарса лараççĕ.

Районри сĕрĕç пайĕн главнăй зоотехникĕ И. Кириллов юлташ колхозсенче сурăхсене сăвас ĕçе организацилес тĕлĕшпе пачах та ĕçлемест. Çавăнпа ĕнтĕ районри колхозсем брынза памалли плана 45 процент çеç тултарнă.

Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас ĕç сӳрĕккĕн пыни парти райкомĕн уполномоченнăйĕсемпе уполнаркомзаг агенчĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеменнинчен тата колхоз руководителĕсем ку тĕлĕшпе ответлăха туйманнинчен килет.

Г. ИСАЕВ.

Малтисемпе танлашмалла

Элĕк районĕнчи чылай колхозсем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнине пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕç: государство умĕнчи хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçларĕç. Районри 86 колхозран 60-шĕ государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем пĕтĕмпех парса татрĕç. Районĕпе государствăна аш-какай парса татнă тата 1946 çулшăн та 146 центнер ытла парса хучĕç. Государствăна çăм памалли плана та район тултарнă. Районри 64 колхоз çăмарта, 60 колхоз сĕт-çу парса татнă.

Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас енĕпе Элĕк ял Совечĕ малта пырать. Çак ял Советне кĕрекен 8 колхоз аш-какай памалли плана 123 процент, çăм памалли плана 102 процент тултарнă. Ял Совет председателĕ Киселев юлташ колхозсене лайăх ертсе пырать, юлса пыракан колхоз председателĕсен доклачĕсене час-часах ял Совет ларуенче итлесе тивĕçлĕ пулăшу парать. Çак ял Советне кĕрекен Жданов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Петриков юлташ) 1946 çулшăн 1559 килограмм аш-какай, 1738 литр сĕт панă. «Звезда» колхоз (председателĕ Иванов юлташ) 1946 çулшăн 523 килограмм аш-какай тата 484 литр сĕт панă.

Ехремкасси ял Советĕнчи колхозсем те аш-какай памалли плана 130 процент тултарнă. çăм, сĕт тата çăмарта памалли плана та ытлашшипех тултарнă. «Первое мая» колхоз (председателĕ Прокопьев юлташ) кăçалхи парăмсене парса татнă хыççăн, 1946 çулшăн 400 килограмм ытла аш-какай; 708 çăмарта, 610 литр сĕт панă. «Труд» колхоз та выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли кăçалхи плана тултарнă хыççăн, 1946 çулшăн 250 килогрмм аш-какай, 1442 çăмарта, 130 литр сĕт панă.

Çавăн пекех Чуракасси, Яркунь-Ушкăнь тата ытти ял Совечĕсенчи колхозсем те государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас енĕпе лайăх ĕçлеççĕ.

Анчах та çакăн пек паха тĕслĕхсене уйрăм колхозсенче тĕл пулма çук-ха. Акă, сăмахран, Тури Выла колхозĕ (председателĕ Семенов юлташ) аш-какай памалли плана 47 процент, çăмарта памалли плана 67 процент, сĕт памалли плана 82 процент кăна тултарнă. «Комбайн» колхоз (председателĕ Кириллов юлташ) выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене çуррине яхăн кăна пурнăçланă. Çавăн пекех «Рой», «Знамя», «Красная Армия», «Заря», «Танк», «Самолет» тата ытти колхозсем те чăтма çук юлса пыраççĕ.

Хăшпĕр колхоз руководителĕсем хăйсем те государство умĕнче парăмлă. «Серп и молот» колхоз председателĕ Д. Соловьев юлташ çак вăхăта çитсе те 41 килограмм аш, 250 çăмарта парса татман. Тури Выла ялĕнчи леспромартель председателĕ Н. Герасимов юлташ 68 килограмм аш, 80 литр сĕт, çăм тата ытти продуктсем те памалла. Çак артель членĕсем государство умĕнче парăмлă пулни пĕтĕмпех вĕсен руководителĕсенчен килет.

Юлса пыракан колхозсем Государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас енĕпе малта пыракан колхозсемпе танлашмалла.

Н. КОНДАКОВ.

ХĔЛЛЕНЕ КĔТМЕН ÇĔРТЕ

Сĕнтĕр районĕнчи Шашкар ял Советĕнчи «Крестьянская газета» колхозра халĕ те авăн çапса пĕтермен, 12 гектар çĕрулмине типтерлĕ пухса кĕртеймен. Колхозра ĕç дисциплини ытла та япăх, ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем кунта вуншарăн шутланаççĕ. Колхоз правленийĕ ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Колхозниксем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçĕ пачах та çителĕксĕр. Колхозниксен пухă вĕсем сайра-хутра çеç пулкалаççĕ.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх витисене те хĕле хатĕрлесе çитермен. Утă çулма тухаччĕнех лаша вити тума тытăннă, ăна халĕ те туса пĕтермен. Выльăх-чĕрлĕхĕн ытти çуртĕйĕрĕсене те юсаса ăшă тытмалла туман.

Колхоз председателĕ Швелькин юлташ: хĕл ытла ир пуçланчĕ., нимĕн те туса ĕлкĕреймерĕмĕр,—тесе ларать.

Н. ПАВЛОВ.

Кулленхи ĕçе йĕркелеме пĕлменнипе

ИШЛЕЙ. Салапайкассинчи «Красное знамя» колхозра (председателĕ А. Виноградов юлташ) ĕç дисциплини питĕ япăх. Çавăн пирки кăна колхоз ялхуçалăх ĕçĕсенче кая юлса пырать.

Колхозăн 1-мĕш бригади (бригадирĕ А. Селедкина юлташ) ытла та юлса пырать. Ку бригадăн ырăш сĕмелĕсем халĕ те уйрах лараççĕ. Колхозра авăн çапас ĕç чăтма çук юлса пырать пулин те, колхозниксем авăн çапма ир тухмаççĕ. Çĕрле авăн çапассине организацилемен.

Колхоз тырри тăккаланса ан пĕттĕр тесен, капан хывас тата авăн çапас ĕçе мĕнпур вăя мобилизацилемелле.

В. ЧИГАРКИН.

Эрмитажа уçни

Государство эрмитажне хăпарса каякан çӳллĕ пусма çине ноябрĕн 4-мĕшĕнче çынсем йышлăн пухăннă. Унта—ученăйсем, искусство деятелĕсем, офицерсем, адмиралсем, генералсем, рабочисем, вĕренекенсем. Вĕсем пурте Совет культурин праçникне килнĕ. Ку праçник вăл—тĕнчери чи чаплă музейсенчен пĕрне уçни пулать.

Пусман çӳлти лаптăкĕ çинчен вĕсене эрмитаж директорĕ И. А. Орбели академик çакăн пек сăмах каланă:

«Культурăшăн çунакан çынсем тăватă çул çурă хушшинче çак эрмитажра пулма пултараймарĕç. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех эрмитажри япаласене инçетри тыла куçартăмăр. Акă халĕ ĕнтĕ çак кунсенче çеç пĕр миллион та çĕр пин экспоната ытла Ленинграда каялла илсе таврăнчĕç. Эпĕ сире, эрмитаж тусĕсем, ырă хыпар каласа саламлама пултаратăп: эрмитажăн пур экспоначĕсем те лайăххăнах сыхланса юлнă. Вĕсенчен нумайĕшне эсир паян ĕлĕкхи вырăнсенчех курма пултаратăр».

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство комитечĕ ячĕпе И. А. Орбели академик государство эрмитажне уçнă тесе пĕлтерет. Совет Союзĕн гимнне калаççĕ. Алăксем уçăлса каяççĕ те çынсем тĕнчери искусство пуянлăхĕн çав тери чаплă залĕсемпе галлерейисем тăрăх пăхса çӳреме саланаççĕ.

Государство эрмитажĕнче малтанхи кунах пилĕк пин çынна яхăн пулнă.

(ТАСС).

КАЗАХСТАНРА ОБСЕРВАТОРИ ТĂВАÇÇĔ

Казахстанра, Алма-Ата хули çывăхĕнче, СССР Наука академийĕн Казахстанри филиалĕн Астрофизика обсерваторине тума йышăннă. Çав обсерватори проектне Л. М. Врангель архитектор туса хатĕрленĕ. Обсерваторие ту айкинче, тинĕс шайĕнчен 1.500 метр çӳлĕрех вырăнта тумалла. Лабораторисем валли пысăк çурт лартма палăртса хунă, сăнамалли пĕчĕк павильонсем, пурăнмалли çуртсем, хуçалăх çурт-хуралтисем, ытти çĕртен пыракан научнăй работниксем валли гостиница туса лартма палăртнă. Çав çуртсем пĕтĕмпе 4 гектара яхăн вырăн йышăнаççĕ. Обсерватори çурчĕсен проектне хатĕрленĕ чухне Вăтам Азири авалхи зодчествăн уйрăмлăхĕсемпе усă курнă.

(ТАСС).

Суйлав законĕ çинчен пĕлсе тăма

6. Союз Советне тата Национальноçсен Советне суйласси

Сталинла Конституци тăрăх, СССР Верховнăй Совечĕ икĕ палатăран—Союз Совечĕпе Национальноçсен Советĕнчен тăрать. Пирĕн государствăн чи аслă органĕ икĕ палатăран тăни политика тĕлешĕнчен çав тери палла вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн çĕршывра пĕр халăх кăна мар, темĕн тĕрлĕ наци, тĕрлĕрен халăх пурăнать. Кашни халăхăн хăйне уйрăм интерес, нацилле традицисем пур. Паллах, пур халăхсен интересĕсем те Верховнăй Советра паларса тăмалла.

«СССР Союзĕ, палла енте,—тенĕ Сталин юлташ,—нумай нацилле государство. Пирĕн верховнăй орган пур, унта СССР Союзĕнчи мĕнпур ĕççынисен, вĕсен национальноçне пăхмасăрах, пĕтĕмĕшле интересĕсем паларса тăраççĕ. Çакă вăл—Союз Совечĕ. Анчах СССР Союзĕнчи национальноçсен, пĕтĕмĕшлĕ интересĕсемсĕр пуçне, тата нацилле уйрăмлăхĕсемпе çыхăнса тăракан хăйсен уйрăм, спецификăллă интересĕсем пур. Çав спецификăллă интересене хисепе хумасăр хăварма юрать-и? Çук, юрамасть. Шăпах çав спецификăллă интересене палартса тăма ятарласа тунă верховнăй орган кирлĕ-и? Сăмах та çук, кирлĕ. СССР Союзĕ пек нумай нацилле государствăна çавăн пек органсăр тытса пыма май пулман пулĕччĕ, кун пирки пĕр иккĕленÿ те пулма пултараймасть. Çавăн пек орган вăл иккĕмĕш палата, СССР Союзĕн Национальноçсен Совечĕ пулса тăрать».

Депутатсене икĕ палатăна та—Союз Советне те, Национальноçсен Советне те—пĕр вăхăтрах суйлаççĕ.

СССР Конституцийĕпе суйлав Положенийĕнче кăтартса панă тăрăх, Союз Советне Совет государствин гражданĕсем суйлав округĕсем тăрăх суйлаççĕ. Вăл округа 300 пин çын кĕрет. Союз Советне суйлама тунă кашни суйлав округĕнчен пĕр депутат суйлаççĕ. Чăваш республикинче, сăмахран, Союз Советне суйламалли 4 округ тунă, çапла вара Чăваш республикинчи суйлавçăсем Верховнăй Советăн Союз Советне 4 депутат суйласа яраççĕ.

Кунсăр пуçне Чăваш республикинчи суйлавçăсем СССР Верховнăй Совечĕн Национальноçсен Советне депутатсем суйласа яраççĕ.

СССР Конституцийĕнче тата суйлав Положенийĕнче каланă тăрăх, Национальноçсен Советне союзлă тата автономиллĕ республикăсем тăрăх, автономиллĕ облаçсемпе наци округĕсем тăрăх суйлаççĕ. Кашни союзлă республика, унта кирек мĕн чухлĕ халăх пурăнсан та, Национальноçсен Советне 25 депутат, кашни автономиллĕ республика—11 депутат, кашни автономиллĕ область—5 депутат, кашни наци округĕ—1 депутат суйласа яраççĕ. Çак нормăсене Сталинла Конституцире йышăнса хăварнă. Çапла вара Чăваш республикинчи суйлавçăсем (ытти автономиллĕ республикăсенчи пекех) Национальноçсен Советне 11 депутат суйласа яраççĕ.

Чăваш республики РСФСР составне кĕрет. РСФСР хăй те Национальноçсен Советне 25 депутат суйласа янă пирки, Чăваш республикинчи суйлавçăсем Горький суйлав округĕ тăрăх Национальноçсен Советне пĕр депутат суйлас ĕçе хутшăнаççĕ.

Çапла вара Чăваш республикинче пурăнакан суйлавçăсем суйлав кунĕнче виçĕ бюллетень алла илеççĕ: пĕр бюллетень Союз Советне суйлама (шурă тĕслĕ), тепĕр бюллетень Национальноçсен Советне автономиллĕ республикăран суйлама (кĕрен тĕслĕ), виççĕмĕш бюллетень Национальноçсен Советне РСФСР-тан суйлама (кăвак тĕслĕ).

Суйлавсем пирки тата тепĕр ыйту тухса тăрать. Совет Союзĕн тулашĕнче, ют çĕршывсенче пурăнакан Хĕрлĕ Çарпа Флот воинĕсем суйлава епле хутшăнма пултараççĕ-ха?

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ йышăннă тăрăх, çавăн пек суйлавçăсем уйрăм суйлав округĕсем тăрăх суйлава хутшăнма пултараççĕ. Ют çĕршывсенче тăракан çар чаçĕсемпе соединенийĕсем кашни 100 пин суйлавçă пуçне пĕр суйлав округĕ туса хураççĕ. Кашни çавăн пек округран Союз Советне пĕр депутат, Национальноçсен Советне пĕр депутат суйласа яраççĕ.

Государство влаçĕн аслă органĕсене икĕ палата йĕркипе организацилесси хăшпĕр ытти çĕршывсенче те пур, анчах вĕсен йĕрки пирĕнни пек мар, пачах урăхла. Буржуалла çĕршывсенче палатăсем пĕртан правалă мар. Çÿлти палата вĕсен демократиллĕ майпа организациленмест. Час-часах çÿлти палатăна буржуалла çĕршывсенче суйласа мар, уйăрса лартнипе туса хураççĕ. Çитменнине тата çÿлти палатăна ытларах право параççĕ.

Пирĕн, Совет çĕршывĕнче, икĕ палати те,—Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕ—пĕртан правалă пулса тăраççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те СССР Верховнăй Советне çĕнĕ закон проекчĕсем тăратма пĕр пекех пултараççĕ. Вĕсене иккĕшне те пĕр вăхăта—4 çул хушши ĕçлеме—суйлаççĕ. Вĕсен сессийĕсен ларăвĕсем те пĕр вăхăтра пуçланса пĕр вăхăтра пĕтеççĕ. Юлашкинчен икĕ палатăна та демократиллĕ йĕркепе—пурне те тивĕç, пĕртан, тÿрех суйламалла йĕркепе вăрттăн сасăласа суйлаççĕ.

«ТĂВАН АТĂЛ» АЛЬМАНАХĂН 23-МĔШ НОМЕРНЕ ПИЧЕТЕ ПАНĂ

Чăваш Совет писателĕсен «Тăван Атăл» альманахĕн 23-мĕш номерне пичете панă. Кĕнекере писатель-врач Пайрашăн «Надя» калавĕ, Ф. Уярăн «Пăлхав» историллĕ повĕçĕн малалли пайĕ, К. Г. Гарин-Михайловскин чăвашсем çинчен çырнă произведенин икĕ сыпăкĕ, В. Давыдовăн «Чемен» поемăн малалли пайĕ. В. Шекспирăн «Отелло» пьесин I-мĕш акчĕ (Кăлкан куçарнă) тата П. Хусангай, Я. Ухсай, П. Тукташ сăввисем пур.

Литература пайĕнче П. Григорьевăн чăвашсен пĕрремĕш писателĕ Спиридон Михайлов çинчен çырнă статьи пичетленет.

Критикăпа библиографи пайĕнче Иван Мучин «Горе от ума» пьесăна чăвашла куçарнă пирки, С. Ялавинăн Ухсай Яккăвĕн çĕнĕ кĕнеки пирки çырнă статьисем пичетленеççĕ.

1.002 ТОННА ТОРФ КĂЛАРНĂ

Тăвай леспромхозĕ кăçал торф кăларас ĕçе лайăх организациленĕ. Иртнĕ çулта 500 тонна çеç торф кăларнă пулсан, кăçал вара 1.002 тонна кăларнă. Ку торфа районри учрежденисемпе организацисем вутă вырăнне хутаççĕ.

ШКУЛ АЧИСЕМ ВАЛЛИ ÇĂМАТА

Муркаш райсовет исполкомĕ çумĕнчи гособеспечени пайĕ шкул ачисем валли 350 мăшăр çăматă йăвалама панă. Ку çăматăсене чи малтанах фронтовиксен ачисене параççĕ.

САД ТĂВАÇÇĔ

Красноармейски районри Чатукасси ял Совечĕнчи «Труженик» колхоз сад тума икĕ гектар çурă çĕр уйăрнă. Унта колхозниксем кăçалхи кĕркунне 100 тĕп улмуççи лартса хăварнă.

КАШНИ ЧĂХРАН 77 ÇĂМАРТА

Ишлей районĕнчи Мăналти Калинин ячĕпе тăракан колхозăн чăх-чĕп фермин çулсеренех колхоза пысăк тупăш парать. 1944 çулта кашни чăхран 90-шар çăмарта, 1945 çулта 77-шер çăмарта илнĕ. Кăçал государствăна 4.268 çăмарта панă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсен районри пухăвĕ государствăна тырă парас ĕç мĕнле пыни çинчен

МУРКАШ. Çак кунсенче кунта коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XXIII-мĕш пленумĕн решенийĕсем çинчен ВКП(б) райком секретарĕн Ильин юлташăн докладне итлесе сÿтсе-яврĕ.

Муркаш районĕ государствăна тырă парас тĕлĕшпе октябрь уйăхĕн варринче республикăра иккĕмĕш вырăнта пулнă. Анчах та октябрь уйăхĕн вĕçĕнче тырă парас ĕç чакса пычĕ. Ноябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана район 94 процент тултарчĕ. Юлашки кунсенче район тырă парас тĕлĕшпе 2-мĕш вырăнтан 6-мĕш вырăна анса ларчĕ.

Районри малта пыракан колхозсем государство умĕнчи хăйсен парăмĕсене парса татнă хыççăн, планран ирттерсе, Хĕрлĕ Çар фондне тырă параççĕ. «Авангард», «Искра», «Красное Сормово», «Герой», «Крестьянин», «Аврора», «Красная Чувашия», «Восток», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем çĕршыв умĕнчи пĕрремĕш тивĕçе чыслăн пурнăçа кĕртрĕç.

Анчах та хăшпĕр колхозсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе чăтма çук юлса пыраççĕ. Саксен шутне чи малтанах «Свобода» колхоз (председателĕ Петровский), «Çĕнĕ хунав» колхоз (председателĕ Ефимов), Ватутин ячĕпе тăракан колхоз кĕреççĕ. «Свобода» колхоз 2229 центнер парас вырăнне 907 центнер çеç панă. Партин пуçламĕш организацийĕн секретарĕ А. Яриков государствăна тырă парасси манăн ĕç мар, колхоз председателĕн ĕçĕ тесе шутлать.

Çав вăхăтрах хăй колхоз председателĕн заместителĕ пулса ĕçлет. Паллах, çак ответлă ĕç çине Яриков пек пăхсан, ĕç йĕркеллĕ пулса пырассине кĕтме çук.

Ватутин ячĕпе тăракан колхозăн паянхи куна государствăна тата 87 центнер тырă памалла. «Çĕнĕ хунав» колхоз председателĕ Ефимов коммунистсен районри пухăвĕнче колхозăн государствăна тата 24 центнер çеç тырă памалли юлнă, тесе ĕнентерме хăтланчĕ. Тĕрĕссипе, «Çĕнĕ хунав» колхозăн тата 110 центнер памалла. «Комбайн», «Красный воин», «Красное знамя», «Знамя труда», «Совет», «Трудовик» колхозсем те государствăна тырă парас тĕлĕшпе района каялла туртса пыраççĕ.

Районри колхозсенче государствăна çĕрулми парас ĕç те начар пырать. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне государствăна çĕрулми памалли плана 43 процент çеç тултарнă. «Красный воин», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем çĕрулмине кăларса та пĕтермен. Государствăна çĕрулми парас тĕлĕшĕпе уйрăмах Йÿçкасси, Панкли, Çатракасси, Шĕвĕш ял Совечĕсенчи колхозсем юлса пыраççĕ. Районра 13 колхоз çеç çĕрулми памалли плана тултарнă.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана тултарас ĕç те начар пырать. Район октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне аш-какай памалли плана 93 процент, сĕт-çу памалли плана 66 процент, çăмарта памалли плана 63 процент çеç тултарнă. 37 колхоз аш-какай, 30 колхоз çăмарта, 15 колхоз сĕт-çу памалли плана тултарнă. Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парас ĕç уйрăм колхозниксем хушшинче чăтма çук начар пырать. Хăймалакасси ял Советĕнче уйрăм колхозниксен 47 центнер аш-какай памалла пулсан, 18 центнер çеç панă.

Колхозсенче кĕлте кÿрес, авăн çапас ĕçсем те юлса пыраççĕ. «Самолет», «Зерно», «Комбайн», «Шупоçи» колхозсем 10—15 кун хушши ĕнтĕ авăн çапмаççĕ.

Доклад тăрăх пренире 14 çын тухса каларĕç. Тухса калаçакан юлташсем районри сĕрĕç пайĕ юлса пыракан колхозсене уйрăмăн ертсе пыманнине палăртрĕç.

Коммунистсен районри пухăвĕ районри колхозсене, пуçламĕш парти организацийĕсене ĕçе тивĕçлипе организацилеме, государство умĕнчи парăмсене çак кунсенчех татма хушса хăварчĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Районри хаçатсене пăхса тухни

Кулленхи ыйтусене тĕрĕс те анлăн çутатса памалла

Шăхасан районĕнчи «Вăйлă тырпулшăн» хаçат (редакторĕ В. Яковлев юлташ) пур тĕрлĕ ыйтусене те анлăн çутатса пама тăрăшать. Сăмахран, юлашки виçĕ уйăх хушшинче хаçатра парти пурнăçĕ çинчен 8 материал, комсомол пурнăçĕ çинчен 5 материал, тырă вырас, авăн çапас, государствăна тырă парас ĕç çинчен 48 материал, укçа-тенкĕ пухасси çинчен 9 материал, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси çинчен 10 материал пичетленсе тухнă. Кунпа пĕрлех тата вырăнти промышленность, шкул, ял Совет ĕçĕсем, Хĕрлĕ Çартан киле таврăнакан çынсене пулăшу парасси çинчен çырнă. Юлашки хыпарсемпе тĕнчери лару-тăру çинчен те çителĕклĕх çутатнă. Хаçат клишесемпе те усă курать, литература кĕтессисем организацилет т. ыт. те.

Кăçалхи çул Шăхасан районĕ тырă вырса пуçтарса кĕртес, авăн çапас тата государствăна тырă парас тĕлĕшпе иртнĕ çулсенчен чылай кая юлса пырать. Çавăнпа та çитменлĕхсене пĕтерес майпа хаçат критикăна анлăн сарса янă. Хаçатăн кашни номерĕнчех фельетонсем пичетленсе тухаççĕ.

Хаçатăн активĕ чылай пысăк, унта колхоз председателĕсем, бригадирĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем, районри руководительсем çырса тăраççĕ.

Çаксемпе пĕрлех «Вăйлă тырпулшăн» хаçатăн пысăк çитменлĕхсем те пур. Отечественнăй аслă вăрçă çĕнтерÿллĕн пĕтнĕ хыççăн мирлĕ аталану тапхăрне куçнă май, пирĕн çĕршывра кулленхи кирлĕ таварсем туса кăларас ĕç анлăн сарăлса кайрĕ. Анчах та çак тĕлĕшпе «Вăйлă тырпулшăн» хаçат çителĕксĕр ĕçлет. Сăмахран, районри чылай колхозсенче чи хĕрÿлле ĕç вăхăтĕнче урапа сĕрмелли тикĕт çитменни питех те пысăк чăрмавсем кÿнĕ. Çав вăхăтрах районри промкомбинатра (управляющийĕ Платонов юлташ) тикĕт юхтараççĕ, анчах та ăна çителĕклĕ таран туса кăларма тăрăшмаççĕ. Çакăн çинчен ĕнтĕ районри хаçат та манса кайнă. Паллах, кулленхи кирлĕ япаласем туса кăларасси вăл вак-тĕвек ыйту мар, вăл пысăк ыйту, ун çинчен районри хаçатра малашне анлăн çутатса памалла. Халĕ хĕле кĕнĕ май промкомбинатра çунасем тума пуçлаççĕ. Районри колхозсенче çунасем çителĕклĕ мар. Çавăнпа та хаçат урлă промкомбинатăн ĕçĕсемпе планĕсем çинчен çутатса пани пур колхозсемшĕн питĕ усăллă пулĕччĕ.

Кунпа пĕрлех тата «Вăйлă тырпулшăн» хаçатра суту-илÿ организацийĕсен ĕçĕсем çинчен çырнă пĕр материал та çук. Физкультурăпа спорт, вулав çурчĕсен ĕçĕсем çинчен питĕ сахал çыраççĕ. Больницасемпе трахпунктсен ĕçĕсем çинчен çырнине те курма çук.

Хальхи вăхăтра пирĕн çĕршывра СССР Верховнăй Советне депутатсем суйлама хатĕрленеççĕ. Районри хаçатсен ĕнтĕ çакна май хăйсен ĕçне тивĕçлипех лайăхлатмалла. Суйлав ĕçĕсемпе пĕрлех кулленхи ыйтусене те тĕрĕс тата анлăн çутатса пымалла, мĕнпур ĕççыннисене тĕрлĕрен хуçалăхпа политикăллă ĕçсене вăхăтра туса пыма мобилизацилемелле.

Югославири суйлав

БЕЛГРАД, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, Белград хулинче учредительнăй пухăва суйлас ĕçе 200.451 çын, урăхла каласан, суйлавçăсен 90,46 проценчĕ хутшăннă. Загреб хулинче—185.266 çын (93,69 процент), Сараево хулинче—92,6 процент, Любляна хулинче—95 процент, Скопле хулинче 89 процент хутшăннă. Малтанхи даннăйсем тăрăх, Черногорире суйлавçăсен 94 проценчĕ ытла сасăланă. Македонири тĕп хуласемпе районсенче суйлавçăсен 84 процентĕнчен пуçласа 100 процентне çитиччченех сасăланă. Сербире чи пысăк 18 хулара (Белградсăр пуçне) суйлавçăсен 93,34 проценчĕ сасăланă. Словенири 8 тĕп хулапа районра, Люблянăна та шутласа—93,12 процент сасăланă.

Белградăн 7-мĕш районĕнче, Тито маршалшăн сасăланă çĕрте, суйлава 90,6 процент суйлавçă хутшăннă. Çĕрлех çакă паллă пулса тăнă: Белградра халăх фрончĕн кандидатурисемшĕн чи нумай çын сасăланă, списоксăр суйлав ешĕкне янă шарсен проценчĕ пысăк мар.

БЕЛГРАД, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Белградра учредительнăй пухăва суйлас ĕçе суйлавçăсен 91 проценчĕ хутшăннă. Союзлă скупщинăна суйлама Халăх фрончĕ тăратнă кандидатсемшĕн Белградра суйлавçăсен 81,53 проценчĕ сасăланă; списоксăр суйлав ешĕкне суйлавçăсен 18,47 проценчĕ шарсем пăрахнă. Национальноçсен скупщинине суйлама Халăх фрончĕ тăратнă кандидатсемшĕн Белградра суйлавçăсен 83,2 проценчĕ сасăланă, 16,8 проценчĕ хăйсен суйлав шарĕсене списоксăр ешĕке пăрахнă.

БЕЛГРАД, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта килекен хыпарсем тăрăх, учредительнăй пухăва пур çĕрте те пысăк çĕкленÿпе суйланă. Çакна чи малтан суйлавçăсен питĕ пысăк пайĕ суйлава хутшăнни кăтартса парать. Суйлав участокĕсен курăкпа тата чечексемпе илемлетнĕ çурчĕсем умĕнче кунĕпех суйлавçăсен пысăк ушкăнĕсем тăнă. Суйлав пур çĕрте те йĕркеллĕн иртнĕ. Суйлавçăсем йĕркене хăйсем асăрхаса тăнă. Пур хуласенче те чирлисемпе ваттисене суйлав участокĕсене лесме автомашинăсем уйăрса хунă. Суйлав комиссийĕсем тавра пĕрлешнĕ çамрăксен активĕ халăх çынсене суйлав пункчĕсене пырса хăйсен суйлав правине пурнăçа кĕртме пулăшнă. Ялсенче халăх комитечĕсем çавăн пек çынсене суйлав пункчĕсене лесме лавсем уйăрса хунă. Эпир Раковица тата Янцы ятлă ялсенче мĕнле суйланине сăнаса çÿрерĕмĕр. Урамсенче уяври пек лайăх тумланнă хресченсем тулли пулчĕç.

Белградра эпир 7-мĕш районри 42-мĕшпе 43-мĕш суйлав участокĕсенче те пултăмăр, çав районра Тито маршал кандидатуришĕн сасăларĕç. Кунта уйрăмах активлăн сасăларĕç. 43-мĕш суйлав участокĕнче ирхине 10 сехет тĕлне суйлавçăсем çуррине яхăн сасăланă. 23-мĕш участокра каçхине 6 сехет тĕлне (урăхла каласан, суйлав пĕтиччен пĕр сехет малтан) 500 суйлавçăран 496-шĕ сасăланă.

Çĕрле Загребран çапла пĕлтерчĕç: хорватсен Кумировац ятлă ялĕнче (Тито маршал çуралнă ялта) суйлава пĕтĕм халăх хутшăннă, суйлавçăсем пурте Халăх фрончĕн кандидачĕшĕн сасăланă.

Суйлава çынсем çав тери нумай хутшăнни, «суйлама ан çÿрĕр» тесе чĕннĕ оппозици панкрута тухнине те кăтартса парать. Хăйĕн ĕçĕ ăнăçманнипе çиленсе, оппозици чыссăр майсемпе ĕçлеме пуçланă. Çапла, Белградри пĕрремĕш районри пĕр суйлав участокĕнче темĕнле çынсем суйлавçăсен-салтаксен пысăк ушкăнĕ хушшинче—списоксăр ешĕк вăл... Тито маршал ешĕкĕ,—тесе «ăнлантарса» çÿрепĕ. Анчах та суйлавçăсене малтан суйлав йĕркине лайăх ăнлантарса панă пулнă, çавăнпа реакционерсен çак ĕçĕ те ăнăçман.

Çĕрле, Халăх фрончĕн кандидачĕсем чи нумай сасă илни паллă пулса тăрсан, Белградра хăй тĕллĕнех демонстрацисем пуçланса кайнă. Суйлавçăсем урамсене хăйсен кандидачĕсен портречĕсене илсе тухнă. Демонстрантсем хушшинче тăтăшах «Сывă пултăр Халăх фрончĕ çĕнтерни!», «Сывă пултăр халăх демократийĕ!» тенĕ сасăсем илтĕннĕ.

ЮГОСЛАВИ МИНИСТРĔСЕН СОВЕТĔНЧИ ПРЕС-КОНФЕРЕНЦИ

БЕЛГРАД, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС) Белградри радио пĕлтернĕ тăрăх, Югослави журналисчĕсемпе ют çĕршывсен журналисчĕсен пресс-конференцийĕнче министрсен совечĕн президиумĕн генеральнăй секретарĕ Бакич сăмах тухса каланă. Вăл Югослави правительствин хальхи вăхăтчен тунă ĕçĕсене пăхса тухнă.

Бакич çапла каланă: Ялтăри конференцин постановленийĕсене тата Титопа Шубашич тунă килĕшÿре кăтартнă обязательствăсене çирĕп пурнăçласа пырса, правительство çĕршывпа государствăна малалла демократизацилемешкĕн Югославин ирĕклĕх вечĕне аслăлатма тата учредительнăй пуху пухма йышăнчĕ. Правительствăпа халăх влаçĕсем пĕтĕм халăх пулăшса тăнипе 8 уйăх хушши ĕçлени çав задачăсене татса панине кăтартрĕç.

Югославин финанс ĕçĕсем çинчен Бакич çапла каланă: хамăр çĕршыва ирĕке кăларнă вăхăтра государство кассисем пушă пулнă, вĕсене оккупантсем тата оккупантсен тарçисем çаратса кайнă. Югославире 7 тĕрлĕ валюта çÿренĕ. Халĕ пĕр валюта туса хунă. Тĕрлĕ йышши укçасене пĕр йышши укçапа улăштарнипе пĕрлех правительство финанс ĕçĕпе финанс законĕсенче пысăк реформăсем туса ирттерчĕ.

Бакич унтан правительствăн ытти ĕçĕсем çинчен, сăмахран, транспорта, рудниксене юсаса хута яни çинчен, хресченсен пурнăçне лайăхлатни çинчен, вăрçă вăхăтĕнче сиен курнă çынсене пулăшни çинчен тата ытти ĕçсем çинчен те каласа панă.

Чугун çулсенчен нумайĕшне юсаса хута янă. Промышленность вăрçăччен шайăн 80 процентне çитнĕ. Çĕркăмăр шахтисемпе рудниксен 90 проценчĕ ĕçлеççĕ ĕнтĕ.

Истрири тата Юлийски Крайнери лару-тăру çинчен Бакич çапла каланă: пирĕн правительство хамăрăн правăсене, урăхла каласан, хамăр халăхсен прависене хÿтĕлемелле тенĕ шухăшсем демократиллĕ çĕршывсенче кăмăла кайнă. Халĕ эпир çав ыйтăва хамăр çĕршывăн интересĕсемпе килĕштерсе татса парассине кĕтсе тăратпăр.

РУМЫНИН ШАЛТИ ĔÇСЕН МИНИСТЕРСТВИ ПĔЛТЕРНИ

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем паян шалти ĕçсен министерствин çак пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă:

«Юлашки эрнесем хушшинче Маниу ертсе пыракан национал-царанистсен партийĕ тата Братиану ертсе пыракан национал-либералсен партийĕ политикăллă тĕллевсемпе йĕркесĕрлĕхсем тума пуçланă. Хăйсем тавра фашистла-реакциллĕ çынсене мобилизацилесе, çав шутра нумаях пулмасть лагерьсенчен кăларса янă çынсене те мобилизацилесе, вĕсем монархистла манифестаци тунă; çав вăхăтра пуринчен ытларах лицейсенче вĕренекен ачасемпе тата студентсемпе усă курса, правительствăна хирĕç кăна мар, государствăри йĕркелĕхпе канăçлăха хирĕç те анархистла выступленисем тунă.

Хĕçпăшалланса, вĕсем хулиганла тата фашистла ĕçсем тунă. Общество учрежденийĕсене тапăннă. Салтаксене тата общество канăçлăхне хÿтĕлекенсене вĕлернĕ. Мирлĕ граждансене хĕненĕ е вĕлернĕ.

Çав юхăма малта асăннă икĕ партин руководителĕсем, çĕршыври фашистсен мĕнпур юлашкийĕсене пухса, малтанах хатĕрленине шута илсе, шалти ĕçсен министерстви йĕркене тата граждансен ирĕклĕхне сыхламашкăн васкавлă та çирĕп мерăсем йышăннă. Йĕркесĕрлĕхсемшĕн ответлă пулса тăракан мĕнпур çынсене палăртас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ».

ЯПОНИРЕ ПЫТАРСА ХУНĂ МЕТАЛЛ УКÇАСЕН ЗАПАСНЕ ТУПНĂ

САН-ФРАНЦИСКО, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Сан-Францискăри радио çапла пĕлтерет: Японире, Куре хулинче, японецсем пытарса хунă никель, кĕмĕл тата ылттăн укçасене тупнă, мĕн пурĕ 5 тонна тупнă. Вĕсене Китайран, Голланди Индийĕнчен тата Британи колонийĕсенчен илсе пынă пулнă. Çав укçасене вăрçăн юлашки уйăхĕсенче Японире хаклă металсем питĕ нумай çитмен пирки Японие янă пулнă.

ЭЙЗЕНХАУЭР США-на КАЙНĂ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентстви Франкфуртран пĕлтернĕ тăрăх, Эйзенхауэр США-на кайма Парижа вĕçсе кайнă.

ЭТТЛИ США-на ВĔÇСЕ КАЙНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, премьер-министр Клемент Эттли ĕнер каçхине США-на вĕçсе кайнă. Атом энергийĕ ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитетăн председателĕ Джон Андерсон та США-на вĕçсе кайнă.

Пăла çинчи колхозсенче

Аслă Пăлан вăтам тăрăхĕнчен пуçласа вăл Сĕве шывне тухаччченех вăрмансем çук. Колхозсен уйхирĕсемпе улăхĕсем кăна анлăн сарăлса выртаççĕ. Тырпул çитĕннĕ вăхăтра вара çак уйхирсем тинĕс пек хумханса лараççĕ. Çак тырă уйхирĕсем тăрăх Аслă Пăла кăна çĕлен пек авкаланса юхса выртать. Ун икĕ айккипе ялсем çип çине тирнĕ шăрçасем пек ларса тухнă.

Пăла пысăк шыв мар, çуллахи шăрăх кунсенче вара вăл типсе ларассăнах туйăнать. Тĕл-тĕл кăна пĕвеленĕ вырăнсенче шыв çыранранах сыпса тăрать. Унта кунĕн-çĕрĕн шыв арманĕсем кăлтăртатса лараççĕ.

Пăлара та çуркунне шыв нумайланать, паха юшкăн лартса хăварать. Çак юшкăна вара Пăла çинчи чăвашсем: юшкăн мар вăл, ылттăн, тесе калаççĕ. Чăн та, Пăла юшкăнĕ çинче пур тĕрлĕ ÿсентăран та вăйлă çитĕнет.

Пăла пирĕн республикăри виçĕ район витĕр юхса тухса Тутар республикинче Сĕвепе пĕрлешсе Атăла тухать. Пăлан вăтам тăрăхĕнче Чкаловскипе Елчĕк районĕсем чикĕленеççĕ. Çак вырăнта икĕ районан чи малта пыракан Ворошилов ячĕпе тăракан, «Марс», «КИМ», «Гвардеец», «Красный Октябрь» колхозсем вырнаçнă. Октябрьти Социализмлă Аслă Революциччен çак ялсем питĕ чухăн пурăннă. Акă, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз вырнаçнă Аслă Пăла Тимеш ялĕнче лашасăр хуçалăхсем çурринĕ яхăн шутланнă. Ялта ик-виçĕ усламçă, 4—5 кулак пуçпулса ытти хресченсене хăйсемшĕн ĕçлеттернĕ. «Марс» колхоз вырнаçнă Сăрьел ялне вара таврари ытти ялсем «кĕтÿç ялĕ» тенĕ, Çав ялти хресченсем хăйсен çĕрне хăйсем акма пултарайман. Кунта кашни килтех качака çеç пулнă, ĕне усрасси çинчен вĕсем ĕмĕтленмен те. Кĕркунне кунти хресченсем хăйсен ик-виç лав тыррине картишĕнчех çапса пуçтарнă.

Чкаловски районри «Гвардеец» тата «Красный Октябрь» колхозсем вырнаçнă ялсем те маларах асăннă ялсенчен уйрăмах пулман.

Халĕ çак ялсенчи колхозсем хăйсен пуянлăхĕпе, тырпул туса илнипе тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнипе палăрса тăраççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозпа «Марс» колхоз, «Гвардеец» колхозпа «Красный Октябрь» колхоз ăмăртса ĕçлеççĕ. «КИМ» колхоз кăçалчен кая юлса пыракан колхозсен шутĕнче пулнă. Кăçал çак колхоза ертсе пыма пултарулла коммуниста Измин юлташа суйланă хыççăн, çуракине лайăх хатĕрленсе тухнă. Колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ ÿснĕçемĕн ÿссе пынă. Час-часах вара колхозниксем лайăх çитĕнекен тырă çине савăнса пăхса: начар колхозсем çук, начар руководительсем кăна пур, тенине аса илнĕ.

Колхозсен уйхирĕсенче вăйлă тырпул çитĕннĕ. Çапах та пĕри те мухтанман. Колхозсем тырпул пухса кĕртме тĕплĕн хатĕрленнĕ. Тырпул пухса кĕртме хатĕрленнĕ вăхăтрах колхозри выльăх-чĕрлĕх çурчĕсене юсанă, çĕнĕ строительство та анлăн пынă. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз çĕнĕ клуб туса пĕтерне.

Хĕрÿллĕ ĕç тапхăрĕ—тырпул пухса кĕртмелли вăхăт пуçланнă. «Красный Октябрь» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсен хирĕнче хăшпĕр вырăнта сĕмелсем курăнкалама тытăннă. Тепĕр икĕ кунтан Пăла тăрăх жнейкăсен сасси кăна янăраса тăнă, вăл сасă кăнтăрла та, çĕрле те лăпланма пĕлмен. «Марс» колхозăн хирĕнче 8 жнейка ĕçленĕ. Самитов, Салахеев машиноведсем кашниех хăйсен сменинче 6—7 гектар вырнă. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри Портнов, Алексеев тата ытти машинистсем хăйсен кулленхи нормисене яланах ирттерсе тырă вырнă. «КИМ» колхозра ватти-вĕттипех ĕçленĕ. Çак колхозри çамрăксем ыраш вырса пĕтеричччен те хиртен яла таврăнман. «Гвардеец» тата «Красный Октябрь» колхозсенче те тырă вырнă вăхăтра кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ.

Жнейкăсен сасси çумне колхозсенче ĕçлеме тытăннă молотилкăсен сасси хутшăннă. Çак ялсенчи пурнăç кăнтăрла е çĕрле, çумăрлă е уяр кун пурпĕрех вĕресе тăнă пек туйăннă. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра тырă вырнă вăхăтрах пĕр чарăнмасăр авăн çапма тытăннă. 78 çулхи колхозник В. Иванов юлташ савра алапа кунне 100 пăт аллас вырăнне 200 пăт ытла алланă. Колхоз сентябрь уйăхĕнчех государствăна тырă парса татрĕ. Октябрь уйăхĕнчех авăн çапса пĕтерчĕ.

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоза Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче çамрăк та пултарулла коммунист В. В. Зайцев юлташ ертсе пычĕ. Колхоз кашни çулах вăйлă тырпул туса илет, пысăк тухăçлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе пырать. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ çак колхоз вăйлă тырпул туса илнĕшĕн Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне хăй аллинче тытса тăрать. Вăрçă çулĕсенче колхоз хуçалăхне тĕреклетсе пынăшăн, вăйлă тырпул туса илнĕшĕн, государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса пынăшăн В. В. Зайцев юлташа Чăваш республики 25 çул тултарнă май Ленин орденĕ парса наградăланă.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз кăçал та пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ. Никита Симаков ертсе пыракан бригада 25 гектар лаптăкран кашни гектартан 21 центнер тулă пухса илнĕ. Комсомолка Ирина Деомидова ертсе пыракан вăйлă тырпул звени хăйне уйăрса панă 5 гектар лаптăкран пурĕ 840 пăт тулă пухса илнĕ. Кашни гектартан 250 центнер çĕрулми пухса илнĕ. Колхоз 360 гектар кĕрхи çĕртме тунă. Хĕрлĕ Çар фондне пиншер пăт планран ирттерсе тырă тата çĕрулми панă. Колхоз государство умĕнче парăмлă мар. Кунта тĕштырă кăна ĕçкунĕ пуçне 3 килограмран кая мар валеççĕ. Отечественнăй вăрçă çулĕсенче 75 хуçалăх ĕне туяннă, кăçал кăна 15 хуçалăх çĕнĕ пÿрт лартнă.

«Марс» колхоз та ялхуçалăх çулне вĕçленĕ, государство умĕнчи пур парăмсене те парса татнă. Колхоз çултан çул тĕреклене пырать. Çак колхоза вунă çул ытла ĕнтĕ ватă коммунист А. Г. Гаязов ертсе пырать. Чăваш республики 25 çул тултарнă уяв ячĕпе колхоза большевикла ертсе пынăшăн А. Г. Гаязов юлташа «Хисеп палли» орден парса наградăланă. Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Гаязов юлташ Хĕрлĕ Çар валли пĕр танк, пĕр истребитель туяннă тата нумай тырă панă. «Марс» колхоз та кăçал ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлерĕ. Кунта та кашни гектартан вăтам шутпа 13 центнер тырă пухса илнĕ. Ĕçкунĕ пуçне 3 килограмм тĕштырă, çĕрулми тата ытти продуктсем нумай валеççĕ.

«КИМ», «Гвардеец», «Красный Октябрь» колхозсем те ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесе, государство умĕнчи пур тĕрлĕ парăмсене те парса татнă. «Гвардеец» колхоз председательне Баранов юлташа тата «Красный Октябрь» колхоз председательне Булатов юлташа колхозсене лайăх ертсе пынăшăн «Ĕçри хастарлăхшăн», медальсем парса наградăланă.

Колхозсем ялхуçалăх ĕçне вĕçлерĕç. Аслă Пăла та лăпланчĕ. Унта халĕ ĕçрен пушаннă колхозниксен савăнăçлă юррĕ кăна янраса, аслă хирсемпе улăхсем тăрăх аякка сухалать.

В. ЯСТРЕБОВ.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00676. Типография № 1 Управлени полиграфпромышленности п. СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59х42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.